Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

33 (7564) № * Юн кун, 2008 çулхи апрелĕн (ака) 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Республикăра**

## Пархатарлă çулăм

Республикăра пурăнакансем те православи тĕнĕн чи аслă уявне паллă тăваççĕ.

Иисуса пăталасан, ăна ĕненекенсем унран каçару ыйтнă. 40-мĕш кунне Иисус чĕрĕлнĕ. Çак пулăма асра тытса уявлаççĕ Мăнкуна.

Пархатарлă çулăм Иерусалимран пирĕн ене кăçал 5-мĕш хут килчĕ. Чăн малтан Пархатарлă çулăм Пукравпа Таса Татиана чиркĕвне, унтан ытти чиркӳсене çитрĕ.

## Тĕнче кубокне килеççĕ

Физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ Анатолий Николаев хăвăрт утакансен Тĕнче кубокне хатĕрленесси палăртнă планпа килĕшӳллĕн пыни çинчен пĕлтернĕ.

Чăваш Ене пирвайхи делегацисем килеççĕ. Колумби спортсменĕсем, Турци представителĕсем республикăна çитнĕ те ĕнтĕ. Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Казахстан команди килет.

## 40 кунта – 10 хутлă çурт

Тунти кун Çĕнĕ Шупашкарта финсен технологийĕпе çуртсем пуçтармалли монолит конструкцийĕсем кăларакан çĕнĕ лини хута кайрĕ. Çак ятпа кунта Раççей регионсен аталанăвĕн министрĕн çумĕ Сергей Круглик тата ЧР Президенчĕ Николай Федоров килнĕ.

Европа технологине вăя кĕртни тăвакан çуртсен пахалăхне тата хăвăртлăхне ӳстерме, хакне чакарма май парать.

**Çур аки – 2008**

## Ырăпа çеç палăрчĕç



Çур акире ырăпа палăракан Д. Быков механизатор.

Кун таврăнсан çур акине кĕтсех тăр: акă сисce те юлаймарăмăр, кăнтăртан тăртăр-и тесе ыйтакан тăрисем вĕçсе килчĕç, сар хĕвелпе ăшă çил вайĕпе хирсем юртан тасалчĕç, çĕр ĕçченĕ умне çурхи ака-суха тухрĕ. Кăçалхи çут çанталăк вара çĕр ĕçченĕн çивĕчлĕхне тĕрĕслеме шутларĕ: çанталăк условийĕсене кура пĕр вăхăтра пулса çитекен çĕрсем кĕске вăхăтра хайсене шуратса хăварма ыйтрĕç. Хатĕр пултăмăр-и-ха эпир çакнашкал операцие тивлăха? Вăхăт çитсен, кӳршĕ хуçалăхсем çур акине тухса кайсан, сӳре агрегачĕ патне пĕрремĕш хут гайка çăраççине йăтса пыракан хресчен пирки вăл малашлăха çирĕп пăхать тесе епле калайăн-ха? Кун пек ĕçлекене, каçăр та, нимĕнле наци проекчĕ те аталану çулне уçса параймасть. Çапла шутлать паян «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи М. Н. Шишокин. Тереççен механизаторĕсем, çурхи уй-хирĕнче те унăн шухăшне хирĕçлемеççĕ, яра куна çанă тавăрса ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

– Çуртрисене 235 гектар, вылăх кăшманне 6 гектар çинче акса пĕтертĕмĕр. Кунпа пĕрлех 145 гектар çинче лайăх хĕл касна кĕрхи культурăсене апатлантартăмăр. 12 гектар çĕр улми лартмалла. Ăна валли те йăлтах хатĕр, – терĕ кĕрхи тулăн пысăк тухăç шантаракан «московская-39» сорчĕн калчи кашласа ӳсекен хире çитсен хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

**Ĕненекенсем валли**

## Турăшсемпе çула тухакансемпе тĕл пулас тетĕр-и?

Пĕтĕм тĕнчери «Турă амăшĕн çăлтăрĕ айĕнче» ăс-хакăлпа çутта кăларас программăпа килĕшӳллĕн Турра ĕненекенсем Владивостокран пуçласа Мускава турăшсемпе çула тухнă. Асăннă мероприятие истори событине – Вырăс православи чиркĕвĕн пĕрлĕхĕ çĕнĕрен йĕркеленсе кайнине халалласçĕ. Çак 20-30 çынран тăракан ушкăн пирĕн район территорийĕнче вара майăн 4-6-мĕшĕсенче пулать.

Майăн 4-мĕшĕнче турăшсемпе çула тухнисем каçхине 9 сехетре Каршлăхри арçынсен Александро-Невски мăнастирне çитеççĕ. Кунта вĕсем мăнастир наместникĕпе Вениамин (Куликов) игуменпа тата мăнастирте пурăнакансемпе тĕл пулаççĕ.

Асăннă ушкăн майăн 5-мĕшĕнче ирхине 10 сехетре çула тухать. Вĕсем 11 сехет те 30 минутра Мăн Сĕнтĕрти Свято-Троицки чиркӳне çитеççĕ. Кунта Мануил (Шитов) игуменпа тата чиркĕве çӳрекенсемпе тĕл пулаççĕ. 13 сехетре вырăнти администраци представителĕсемпе тата шкул ачисемпе тĕл пулу иртет. Çак кун 16 сехетре вĕсем малалла çула тухаççĕ. 19 сехетре Москакассине çитеççĕ. Вырăнти ял администрацийĕн представителĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Майăн 6-мĕшĕнче ирхи 9 сехетре турăшсемпе Нискассине çул тытаççĕ. 13 сехетре Яроспавка ял тăрăхĕн представителĕсемпе тата шкул ачисемпе тĕл пулаççĕ. 14 сехетре хĕреслĕ çул çӳреве хутшăнакансем, район территорийĕнчен тухса, Етĕрне районне çул тытаççĕ.

Кăмăл пуррисем асăннă вырăнсенче тата вăхăтсенче турăшсемпе çула тухакансемпе тĕл пулма пултараççĕ.

Л.ПАВЛОВА.

**Паян – Пушар хурал ĕçченĕсен кунĕ**

**ПУШАР ХУРАЛĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Кашни çынах пурнăçра малалла пăхать, çурт-йĕр лартать, çулсеренех хăйĕн хуçалăхне çирĕплетес тесе тимлет. Эсир уйрăм çыннăн, патшалăх пуянлăхĕ вут-кăварта ан пĕтĕр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Вут-кăвартан сыхланас тĕллевпе профилактика ĕçĕсене туса ирттеретĕр. Инкек сиксе тухсан вара çулăмпа кĕрешетĕр, çынсен пурнăçне, пурлăхне çăлатăр. Тавах сире çакăншăн. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче сирĕн ĕç пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Эсир малашне те пушар хăрушсăрлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшса, професси тĕлĕшĕнчи пултарулăха ӳстерсе пырасса шанса тăратăп.

Сире çирĕп сывлăх, çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçĕрте ăнăçу, пурнăçра телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Майăн 1-мĕшĕ – Çуркуннепе Ĕç уявĕ**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Сире пурне те Çуркуннепе Ĕç уявĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв çуркунне çут çанталăк чĕрĕлсе вăй илнипе, пултаруллă ĕç çавăнăçĕпе тачă çыхăннă. Ахальтен каламан вĕт ваттисем: «Ĕç – пурнăç тыткăчи», – тесе. Пирĕн пурнăç мĕнле пуласси те хамăртан, хамăр тăрăшулăхран килет. Çĕр ĕçченĕ паян çĕнĕ тырă никĕсне хывса хăвараççишĕн, кĕркунне пӳлме тулли пултăр тесе тимлет. Çавăнпа пĕрлех йывăç лартмалли тата тавралăха тирпей-илем кĕртмелли уйăхлăхра та тăван Муркаш енĕмĕр илемлĕрех пултăр тесе май килнĕ таран тăрăшмалла. Уркенмесĕр, йывăрлăхсенчен хăрамасăр вăй хуратпăр пулсан, çемьере тулăх пурнăç, кирек епле отрасльте те çитĕнӳсем пулĕç. Районăмăр та ытларах ешерĕ, чечекленĕ, пуянланĕ, çĕршывăмăр та вăйлăрах пулĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатăп. Ĕмĕттĕллевĕрсем пурнăçа кĕччĕр. Çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç хуçалантăр. Ĕçлес, тăрăшас кăмăл, вăй-хал пĕрре те ан иксĕлччĕр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Пенсионерсене валли**

## Уяв кунĕсенче пенси илме

РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕ çапла пĕлтерет. Федераллă почта çыхăнăвĕн тата кредит организацийĕсен ĕç режимне шута илсе 2008 çулхи май уйăхĕнчи уяв тата кану кунĕсенче пенсисемпе ытти тĕрлĕ социаллă тӳлевсене çак графикпа парĕç.

Федераллă почта çыхăнăвĕн организацийĕсем урлă:
– майăн 3–5-мĕшĕсенче – графикпа килĕшӳллĕн;
– майăн 6–8-мĕшĕсенче – майăн 6–9-мĕшĕсемшĕн;
– майăн 10-мĕшĕнче – графикпа килĕшӳллĕн.

Кредит организацийĕсем урлă:
– апрелĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса – майăн 2–4-мĕшĕсемшĕн;
– майăн 5-мĕшĕнчен тытăнса – тӳлев графикĕпе килĕшӳллĕн.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

**Республика кунне хатĕрленсе**

## Пĕр-пĕрне ăнланни кирлĕ

Чăвашсен мĕн авалтан пыракан ырă йăла пур. Ку вăл – тавралăх тирпей-илемĕшĕн тăрăшасси. Уйрăмах çак ĕçсене çурхи вăхăтра туса ирттермелле. Тĕрлĕрен тасамарлăх çиеле нумай тухать. Кунсăр пуçне тата кăçал Республика кунне пирĕн районта ирттересси пирки те пурте пĕлетпĕр. Апла пулсан ответлăх туйăмĕ кашнийĕнех питĕ пысăк пулмалла. Тавралăха тирпей-илем кĕртесси ытлашши нумай укçа-тенкĕ тăкакласси çыхăнман. Çак ĕçе куллен тата кашнин туса пымалла.

Халĕ вара мĕн курма пулать-ха? Район центрĕнчи тĕп урамсенче йĕрке кĕртме тытăнтăмăр пулин те, тумалли ĕçсем питĕ нумай-ха. Ку енĕпе туса ирттерме пăхнă ĕçсем палăртнă пек пурнăçланса пымаççĕ.

Октябрĕ 50 çул урамри нумай хваттерлĕ çуртсем çывăхĕнче хăйсен ирĕкĕпе лартса тултарнă, санитарипе пушар хăрушсăрлăхĕн мĕнле нормисемпе те килĕшсе тăман сарайсене пăсассипе, территорисене тасатассипе сахал мар хăшкăлма тиврĕ. Палăртса хăвармалла, кунта ял тăрăхĕн бюджечĕнчен сахалтан та 100 пин тенкĕ тухса кайрĕ. Тĕрĕссипе ку укçа-тенкĕне сарай хуçисен тӳлесен тĕрĕсрех пулатчĕ. Кунпа анчах çырлахсан тем пекехчĕ, кашни сарая пăсассипе кампа кăна харкашма, ятлаçма тивмерĕ пулĕ. Темĕнле сăмах калакан та пур. Кама япăх-ха çак ишĕлчĕк сарайсем вырăнĕнче ача-пăча площадкисем пулсан, йĕри-тавра чечексем ешерсен?

Сарайсем пачах кирлĕ мар тесе каламастăп. Ял çыннин вылăх-чĕрлĕх усрамасăр та май çук. Сарайсем валли ятарлă вырăнсем уйăрса паратпăр вĕт-ха. Хваттерсен подъезчĕсем патне çити вырнаçтарса тухнă сарайсенчен вара тĕрлĕрен тасамарлăх тавралла сарăлать, шăнапăван явăнать. Мĕнле тирпей-илем, санитари тасалăхĕ, пушар хăрушсăрлăхĕ пирки калаçма май пур кун пек чухне?

Çак сарайсен хуçисенчен хăшĕсем çакăнта хăйсен сарайĕ пулнине манса та кайнă пулĕ. Вĕсене кун пирки темиçе хут пĕлтерсен те сарайсене вĕсем хăйсен ирĕкĕпе пăсмарĕç. Кун пек сарайсене тракторпа тĕктерсе ишĕлтерме тиврĕ. Пĕтĕмпе сарайсем патĕнчен КамАЗпа 60 автомашина тĕрлĕ тасамарлăх тиесе турăмăр.

Тĕлĕннипе месерле кайса ӳкмелли тĕслĕхсем те пулмарĕç мар. Пĕр сарай хуçи ял администрацине усал тăвас тĕллевпе сарайне вăрттăн хăйĕн качакине кăкарса хăварнă. Сарайне тракторпа тĕкнĕ чухне качаки вара чипер-йĕркеллех тухса тарчĕ. Çакăн пек хăтланса хуçи ял администрацийĕнчен качака укçи те, сарай хакне те шыраса илесшĕн пулнă иккен.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче тирпей-илем кĕртессипе, тасамарлăха пуçтарса тухассипе лайăх ĕçлекенсене те палăртнă пулăттăм. Акă Н.З. Гаврилов тата А.А. Смирнов Муркашри подстанци патĕнчи тата Хорнуйĕнелле кайнă çĕрти кĕпер çывăхĕнчи ăпăр-тапăра тасатассипе-тирпейлессипе нумай тăрăшрĕç.

Эрнесерен халĕ район центрĕнче тирпейилем кĕртессипе субботниксем йĕркелетпĕр. Предприятисен, организацисен, учрежденисен ĕçченĕсем вĕсене хутшăнаççĕ. Çав вăхăтрах уйрăм çуртсенче пурăнакан хăш-пĕр çынсем хăйсен килĕсем умĕнчи тасамарлăха тасатма та хутшăнасшăн мар. Кам пырса тасатса памалла-ши вĕсене? Картисене камăн юсамалла-ши, сăрламалла-ши? Муркаш ялĕ вăл район центрĕ вĕт-ха. Çынсем район центрĕнчи йĕркелĕх урлă пĕтĕм района хаклаççĕ. Депутатсен ял тăрăхĕн Пухăвĕн йышăнăвĕпе кашни çыннăн султалăкра тавралăха тирпей-илем кĕртнĕ çĕрте икĕ кун ĕçлемелле тесе йышăннăччĕ. Кăçалхи çулшăн вăл питех те çитĕнсĕр пулса тăрать. Теприсем вара икĕ кун мар, икĕ сехетне те ĕçлесшĕн çунмаççĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Техникăпа усă куракансене пĕлме**

## Уйăхлăх пуçланать

Юлашки çулсенче çынсен харпăрлăхĕнче те тракторсемпе прицепсен йышланнăран тата вĕсем те çур аки ĕçĕсене активлă хутшăннăран Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕ вĕсене тĕрĕслессипе çу уйăхĕнче уйăхлăх-операци ирттересси пирки приказ кăларчĕ. Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çынсен харпăрлăхĕнче усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, техникăпа ĕçленĕ чух пушар хăрушсăрлăхне пăхăнасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси малти вырăнта пулĕ.

Вулакансене кăçалхи уйăхлăх-операцие пырса тивекен çĕнĕлĕхсемпе паллаштарни те ытлашши пулас çук. Ку вăл «Раççей Федерацийĕн административлă правонарушенисем çинчен калакан Кодексне административлă правонарушенишĕн укçан шыраса илес пая улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă саккун. Унпа килĕшӳллĕн йĕркене пăсакан техника хуçисене çакăншăн айăплавсем кĕтеççĕ: тавралăха нормативпа пăхниччен ытларах варалакан е ытларах шавлакан транспорт хатĕрĕпе ĕçе кăларнăшăн; тракторсене тата хăй тĕллĕн çӳрекен строительствăпа çул-йĕр машинисене эксплуатацилене чух правилăсемпе нормăсене пăснăшăн; патшалăх тĕрĕслевçин саккунлă хушăвне пăхăнманшăн; патшалăх тĕрĕслевçин предписанине вăхăтра пурнăçламаншăн; сведенисем вăхăтра тăратманшăн-кăтартманшăн; транспорт хатĕрĕсене патшалăх регистрацине тăратас правилăсене пăснăшăн. Тракторсемпе ĕçлекенсене саккунри çĕнĕлĕхсем шухăшлаттарма тивĕç.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР Гостехнадзорĕн районти аслă инспекторĕ.**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Юратнă аннене, хунямана, кукамая, асаннене – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Раиса Степановна ПЕТРОВАНА** çак кунсенче 75 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр, ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Пире, пилĕк ачине, ӳстерсе ура çине тăратнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сана эсĕ пурришĕн. Сывлăхлă пул, ан чирле, малашне те пире савăнтарса пурăн.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кĕрӳшĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, прамăнукĕсем.**



Юратнă хĕрĕме, хаклă мăшăрăма, аппана, кукамая, тăхлачăна – Ситуккасси ялĕнче пурăнакан **Калерия Порфирьевна СОРОКИНАНА** 55 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Москакассинчи вăтам шкулта çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парас енĕпе нумай çул хушши тăрăшатăн. Çак пархатарлă ĕçре вăй хунăшăн, чунтан тăрăшса ĕçленĕшĕн сире кашни шкул ачипе ашшĕ-амăшĕ çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калать. Тавах сана ытарайми ырă кăмăлушăн, чун ăшшине ним хĕрхенми парнеленĕшĕн.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, юратнă мăшăрĕ, ачисем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**